ВĔРЕНТЕКЕНСЕНЕ ПУЛĂШМА

**Виталий СТАНЬЯЛ**

# Митта Ваçлейĕ: «Çĕкленчĕ сыпăннă çунатăм...»

## «Шурă тум тумланнă Шупашкар...»

Шупашкăрти çуллахи хĕвеллĕ ир. Аслă урамра халăх йышлах мар. Пире хирĕç тăвалла шурă тумлă хăтлă çын хăпаратчĕ, çурă шĕлепкине алла тытнă, васкамасăр шухăшлăн утать.

Вĕренме кĕрес шутпа вĕтеленекен Элекканпа Денис Гордеева тата ыттисене тĕп вулавăша çул кăтартса яракан студент, манăн ентеш Энтри Алексеев шурă тумлă та тирпейлĕ çын умĕнче чарăнса: "Чăваш ачисенчен Митта сăвăçа салам!" – тесе хыттăнах каларĕ. Поэт çӳçне шăлса илчĕ, чарăнса тăрсах пире ăшшăн алă тытса саламларĕ. Энтри Рыкка пĕлтĕр Миттапа пединститутри "Студентсен çурхи уявĕнче" паллашнă иккен.

Хытах савăнтăмăр. Вара Атăл хĕрринчи тĕп вулавăша кĕрле-кĕрле калаçса утрăмăр. Денис Гордеев анатрисем пулнăран Миттана унччене вуланă. "Кăмăлтан" кĕнекери сăвăсене тӳрех 99 енрен уçса пăхма сĕнчĕ:

«Пит маттур-çке Иванов бульварĕ, Пыллăхри пек çамрăк çăкасар. Çта çитсен те манăçа тухмарĕ, Шурă тум тумланнă Шупашкар...» Сăвва самантрах пăхмасăр калама вĕрентĕмĕр.

Çав 1957 çулхи çуллах Митта Ваçлейĕ вилсе кайнă, ун çинчен эпĕ студент пулса тăрсан кĕркунне çеç пĕлтĕм.

Сăвăçăн хавасланнă сăнĕ ман асра ĕмĕрлĕхе тăрса юлчĕ. Пĕрре тĕл пулниех чунтан юратса пурăнмалăх пулчĕ. "Кăмăлăмпа шухăшăм" (1959) кĕнеки вара поэтпа иккĕмĕш хут чĕррĕн калаçнăн туйăнчĕ. Виçĕ Юмарт – Валерий Егоров, Виталий Чекушкин, Геннадий Трофимов тата икĕ Гордеев Денисч Элеккан – Миттана асла хуратчĕç, вăл çырнисене, шухăшланисене вăл вăхăтра литпĕрлешӳре сӳтсе явман кун та пулман-тăр.

Манăн тăвăнса çитнĕ чуншăн вăл вăхăтра Митта чăтăмлăхĕ эмел выраннехчĕ...

## «Хам сăмаха каларăм...»

XX ĕмĕр пуçĕпе вĕçне тата ăрусен асне Митта Ваçлейĕ вичкĕн шухăшлă та таса чунлă сăвăç ячĕпе кĕрсе юлчĕ. Ĕнтĕ ун пирки ка-

лас ырă сăмаха йăлтах каланă, вăл çырнине йăлтах пухса кăларнă темелле, анчах пухмалли те, пуррине саманасен виçипе картса хакламалли те, ятне чыслamalли те чылай-ха.

Капла калани вăл Митта Ваçлейĕн пурнăçĕпе пултарулăхне халиччен хак паманнине пĕлтермест. Сăваç телейне, тăван халăхра вăл нихçан та ерчĕн ывăл пулман, вăйпитти вăхăтне пусмăр картинче ирттерсен те хăйне мĕскĕн тарçăра шутламан.

Таланчĕшĕн, элтешле (гражданла) хастарлăхĕшĕн ăна малашне те Çеçпĕлпе, Хусанкайпа юнашар лартĕç, чăтса ирттернĕ хурлăхĕнчен пин хут сăваплăрах чыспа мухтаса пуç тайĕç. Поэтăн çутă сăнарĕ, чăтăмĕ, çирĕплĕхĕ, ăсталăхĕ, шухăшĕсем çапла хак пама хистеççĕ.

Митта Ваçлейĕ – чăваш халăхĕн юратнă ывăлĕ. Çĕнетӳ сехечĕ çапсан унăн сăввисем тата уççăнрах, ăнланмалларах илтĕнсе кайрĕç. Сăваç хăй каланă пекех, вĕсем шăратнă хурçă пек янăракан пулса тăчĕç. Вăхăт вĕсене тĕрĕслесе хакларĕ.

Мĕн тăвăн – пурнăç диалектики кăткăс! Паян вăл пĕрне çĕклентерсе хăпартать, ыран – тĕпĕрне, виççĕмĕшĕнче тата пачах та тивĕçлĕ марри çӳле кармашать... Пĕрех те, темле пулсан та, тĕрĕслĕх витĕр таса шухăшлă сăмахсем кăна, вăхăт али витĕр тарăн туйăмлă поэзи çеç упранса тухаять. Пушшăн паварни те, чуххăммăн чакăлтатни те часах сивĕнет, вара çӳлĕк айĕнче вĕсенчен сăмах купи кăна выртса юлать.

Пичетленнĕ сăмах та, сăвă та çулсеренех шутсăр нумайланать. Татса кайнă пĕверен юхакан шыв пекех кĕрлет çăмăлчах сăвă-юрă. Ытти пин-пин кĕнеке хушшинче йĕрсĕр иртекен сăвă пуххи тем чухлех. Çапла пулмала та-ши вăл? Çав чараксăр юхăмра ăслă е ухмах, тирпейлĕ е лăп-лап, хитре е тĕссĕр сăмахсен юхăмĕнче – Митта Ваçлейĕн "Кăмăлăмпа шухăшăм" (1959) тата "Çырнисен пуххин" 2 томĕ шыв илеймен утрав пек ешĕлленсе пурăнаççĕ.

Пĕр сăвă хыççăн тепри, Петĕр Хусанкай каларăшле, "чăн-чăн ĕнчĕ пĕрчисем пек йăлтăртатса тăраççĕ. Халăх чĕлхи, наци сăн-сăпачĕ, сахал сăмахпа нумай калама пĕлни, таса кăмăл, вĕри чĕре таппи, тарăн шухăш – акă мĕн туять вулакан Митта сăввисенче".

Сăвăçсем çинчен ырласа е хурласа калаçни, тен, вырăнлах та мар пулĕ. Сăввисене вула та – виç-тăват çавраранах вĕсем мĕн туталлă пулнине туйса илетĕн. Лайăх сăвă вăл поэзие юратса е ăнлансах кайман çынна та мĕн чухлĕ те пулин илĕртетех. Тепĕр чухне мĕн илĕртнине те каласа параймастăн, анчах çав туртăм пурри, вăл килĕшӳллĕ пулни – куç кĕретех. «Сиктермерĕн мана кĕленче сăпкара, Макăрсан пыл хумарăн тута-çăвара, Анчах сансăр пуçне, ыр çĕршывăм, Тĕнчере чи хакли тек пур-ши вăл». (1926).

Çамрăклах каланă теме те йывăр. Ватă çын сăмахĕ пек витĕмлĕ. Е тата тепри, çав вăхăтрах калани: «Çамрăклăх – вут асамат. Çамрăклăх, теççĕ, çиçĕм. Çиçĕм тĕнче касаймасть, Çамрăклăх касĕ те виçĕ». (1926) «Çĕршывăм, çĕршывăм, мĕн кирлĕ сана, Мĕскер эс ыйтатăн, мĕскĕр ăмсанан? Туятăн-и эсĕ çак пирĕн чĕре – Пĕр саншăн тапать вăл, пĕр саншăн хĕрет» (1926).

Яш чухне (хăй калашле – ăнкару çулĕсенче) çĕкленӳллĕн çырнисем. Пăр тап-

раннӑ, уҫӑ сывлӑш ҫӗкленнӗ вӑхӑт. XXI ӗмӗр пуҫламӑшӗнче арканакан, ҫаратакан ҫӗршыв ҫинчен хальхи ҫамрӑксем сӑвӑри пекех шутламаҫҫӗ пулсан та, паттӑрлӑх (патриотизм) туйӑмӗ вуҫех сӳнмен-ха. Паян та яш-кӗрӗмӗн Тӑван ҫӗршывран ыйтмалли сахал мар – ӑҫта сулӑнать вӑл, кама ҫаратать, мӗскер ӑмсанать?

Миттан чӑн-чӑн вичкӗн сӑввисем кусем мар. Вӗсем каярах ҫуралнӑ, хӗн-хур ҫулӗпе Ҫӗпӗр урлӑ каҫса килсен.

«Кам тӳссе ирттерчӗ ҫынпа тан, Кам ырра усал теме хӑймарӗ, Усала айванӑн пуҫ таймарӗ – Ҫав калатӑр пӗтӗм кӑмӑлтан: Ҫамрӑк ӗмӗр харама каймарӗ (1957).

Йӗркерен шӑратнӑ таса поэзи тӗслӗхне "Хальхаҫҫӑн ҫырнисем" тата "Тайӑр" сӑвӑ ярӑмӗсенче куратпӑр. "Тайӑр" ятпа пӗрлештернӗ сӑвӑсен ярӑмне поэма тесе пӑхаҫҫӗ. Тен, ӑна вӗҫне ҫитерсе сыпӑнтарнӑ пулсан, вӑл хайне евӗрлӗ поэма пулатчӗ те пулӗ. Хальлӗхе – пӗр сӑнарпа та мӗнтелпе (темӑпа) шӑнӑрласа ҫыхнӑ сӑвӑсен ярӑмӗ (цикл) вӑл. Александр Твардовский "Василий Теркинӗ" е Петӗр Хусанкайӑн "Тилли юррисем" шайне ларас хайлав никӗсӗ кунта. Пултару сулмакӗ, пиҫӗлӗх, шухӑшпа кӗвӗ пӗрлӗхӗ. Кашни йӗрки, кашни сӑмахӗ – вушар ӑшне ҫапса лартнӑ качаллӑ пӑта пек. Ҫирӗпленсе ҫитнӗ шухӑшсем, тӑвӑнса лӑпланнӑ кӑмӑл, пулассине малтанхипе картса пӑхни, ӑсчахлӑх, виҫелӗх... ӗмӗтпе талпӑну.

"1957 ҫул. Январӗн 1-мӗшӗ. Иртнӗ ҫул маншӑн та пултарулӑх ҫулӗ пулса тӑчӗ. Мӗн шухӑшланине пӗтӗмпех тӑваймарӑм пулсан та, ҫапах та, вӑй ҫитнӗ таран, чӑваш ҫырулӑхӗнче хам сӑмаха каларӑм".

Тискерлӗхпе суялӑх, хаярлӑхпа ултав, ҫӑткӑнлӑх иртӗхсе тӑнӑ чухне тӗрӗслӗхпе яваплӑхшӑн кӗрешекенсен шӑпи ялан тенӗ пекех пӳкле вӗҫленнӗ. Асилӗр Герцена, Пестеле, Пушкина, Лермонтова, Гарсиа Лоркӑна, Ҫеҫпӗле, Юмана. Тӗрлӗ халӑх ывӑлӗсем, тӗрлӗ ҫӗртисем, тӗрлӗ вӑхӑтрисем.

Пӗрех те кун-ҫулӗсен чуппи пӗр йӗрлӗ, кӗрешӗвӗ пӗр хӗмлӗ те синкерлӗ. Ҫын аллинчи шӑпа вӗсен ӑс-хакӑл хӑватне сӳнтереймен, тӗрӗс шухӑшӗсене, вӗри сӑмахӗсене, таса ӗмӗчӗсене вараласа хурайман. Тӗнче ҫав хӑвата курса тӗрӗс хакланӑ.

Митта Ваҫлейӗ канӑҫсӑр та хатар, талантлӑ ҫынсен картинчен. Ӑшӗнче тапса тӑракан кӑмӑлне, пуҫӗнче ҫаврӑнакан шухӑшӗсене пухусенче хӑрамасӑр калать, тӳресене ҫырса парать, юлташӗсене ҫине тӑрса ӑнлантарать. Чап илес тесе-и? Вӗҫкӗнленсе хитре курӑнам тесе-и? Хаяр тытӑҫу мӗнле ҫулӑм сапнине курми качча пулман-ха Митта Ваҫлейӗ. Хӑравҫӑ та сутӑнчӑк эрттел хушшинче чухне те кӗрешӗве ҫӗкленме хӑраман. Кайран, пуҫилрен килсен мӗнле алӑ тытса, пӗрле каласса ӗҫленӗ-ши вӑл пӳтсӗрсемпе? Литература умӗнчи пысӑк тивӗҫне пурнӑҫлас тесе шӑлне ҫыртса чӑтнӑ пулӗ тетӗп. Каласупа мар, ӗҫпе кӑна хупласа хума пулать йӗксӗк каҫрашкасене.

Кашни вуламассеренех Миттан сӑмах ӑсталӑхӗ, шыравӗ савӑнтарать: «Ҫӳрессе ҫинҫелмен ҫӳрен ут... Лар, савни, вӗҫтерер пӗреххут!» е тата «Ҫӑлтӑр хушка, ан хашка Сывлӑш ҫавӑрми. Тӗк татнӑ пек ан васка– Иртрӗ ҫаварни...» Нимле урӑхла калама ҫук ҫаврӑмсем. Аптранӑ енне вырӑсла куҫарнисене тытса пӑхатӑп. Ҫук, яхӑнне те пыраймаҫҫӗ! Ҫакӑ ӗнтӗ вӑл тӑван сӑмах техӗмӗ, шухӑш витӗмӗ, сӑнар сисӗмӗ!

Тӗрмерен тата Ҫӗпӗрти ссылкӑран янӑ ҫырӑвӗсем, суд ӗҫӗсем Митта Ваҫ-

лейӗн тасалӑхне кӑтартаҫҫӗ. Эпӗ ун йышши мӗнтелсене (документсене) вуламан мар. Паллӑ ҫынсемех пӗр-пӗрин ҫине нӗрсӗр элек сапнине, хӑйсене сыхласа хӑварас тесе ыттисене куҫ хупса илмесӗрех сутнине вуласа йӗрӗнни те пулнӑ.

Митта ҫырӑвӗсем, тӗрме хучӗсем сӑвӑҫ шӑпине, савӑнӑҫӗпе асапне, кӑмӑлтуйӑмӗн тымарӗсене лайӑхрах ӑнланма, вӗсем урлӑ сӑввисен хакне курма пулӑшаҫҫӗ.

Мита Васлейӗ – тӗрлӗ енлӗ талант. Поэзире вӑл сӑвӑсемпе ҫеҫ мар, поэмӑсемпе те паллӑ («Савни парни», «Сӗрӗмре», «Ҫӗр чӗлхи», «Октябрь тантӑшӗ», «Тайӑр»). Вӑл А.Пушкинӑн «Борис Годунов» трагедине, М.Горькин «Фома Гордеев», Л.Кассилӗн «Аслӑ хирӗҫтӑру» романӗсене, В.Овечкин очеркӗсене, ҫавӑн пекех тӗрлӗ халӑх поэчӗсен сӑввисене чӑвашла куҫарнӑ. Митта Васлейӗн очерксем, статьясемпе рецензисем те сахал мар. Унӑн поэзийӗпе прозинче, ҫырӑвӗсемпе куҫарӑвӗсенче упранакан ӑсчахлӑх, кӑмӑл-туйӑм – чӑваш халӑхӗн ӑсхакӑл пуянлӑхӗ. Кӗрлесе ҫӗкленекен ҫӗнетӳ саманин ирӗклӗ кӗрешӗвӗнче эпир хамӑр ӗҫсемпе шухӑшсем ҫине Митта куҫӗпе те пӑхса илетпӗр: тӗрӗс сӑмаха, ырӑ ӗҫе мухтатпӑр, нӗрсӗрлӗхӗ, панккавлӑха сивлетпӗр. Митта Васлейӗ – пирӗн пӑлхавӑрлӑ вӑхӑтӑн шанчӑклӑ юлташӗ. Кӗрешӳри хастарсен тусӗ вӑл.

## Митта кӑмӑлӗпе шухӑшӗсем

Митта – гуманист, патриот, философ. Ҫакна ӑнланса илме вӑл ҫырнисене вуласа пӑхӑпӑр. "Эпир икӗ ӗмӗр пурӑнас ҫын мар, патша та пулас ҫук. Пӗртен пӗр кӗске ӗмӗре ҫын пек, таса ҫын пек ирттересчӗ, ирӗккӗн те, ирӗксӗр те сутӑнчӑк пулас марччӗ". (Кун кӗнеки, январӗн 5-мӗшӗ, 1957).

"Ӗҫхӗлӗн пултарулӑх отчечӗ... Шавлипе Харлампьев мӗскӗне мӗн кӑна каласа хӑртмарӗҫ. 1937 ҫулхи ӗҫсене аса илтерчӗҫ... Эпӗ тухса калама тумарӑм, йӳҫӗ ыйту панӑшӑн та пӑшӑрхантӑм. Ҫынна (кирек кам пултӑр) хур тунине курма пултараймастӑп, чун темӗн пек тарӑхнӑ пулин те садист пулма пултараймасть иккен". (Кун кӗнеки, мартӑн 23-мӗшӗ,1957).

Миттан яш чухнехи хастарлӑхӗ пӗтнӗ тесе калама май ҫук. Вӑл пурнӑҫа тарӑнрах хаклама вӗренсе ҫитнӗ-ши? Аса илӗр-ха унӑн 1935 ҫулта чӗлхе ыйтӑвӗсемпе тухса каланине е 1937 ҫулта писательсен пухӑвӗнче каланӑ шӑлламас сӑмахне – унта вӑл Аркадий Золотова, Иван Кузнецова, Ефрем Чернова тата ыттисене мӗнле ӑскать! "Я знаю, что меня и по сей день некоторые товарищи обвиняют в национализме только потому, что я много говорю по этому вопросу. Вопрос этот в наших чувашских условиях как следует (во всех деталях) не разрешен, о нем говорят с опаской, не членораздельно, как бы не обвинили, дескать, в местном национализме и т. д. Я критикую вас, товарищи, замешанные в это дело и вольно и невольно, в том, что вы забываете самые сокровенные мечты нашего освобожденного народа, о лучшем будущем, что вы не верите в то, что наш, одаренный народ наравне с другими народами придет и должен прийти в коммунистический строй – где будет общий язык и общая культура – со своей богатейшей культурой и внесет ее в сокровищницу мира..." (Ҫырнисен пуххи, 2 т, 2004, 470 ен).

Ку ыйтусемпе шухăшламалли темĕн чухлех. Митта Ваçлейĕ ун чухне Юман, Рзай, Золотов пирки тиркесе каланисем тӳрре тухмарĕç.

Паллах, 1937 çул унăн ăс-тăнне хытах хускатнă. Хăранипе икĕпитленнĕ-ши Митта, капланнă тарăхăвне чараймасăр Ялавинланнă-ши е чееленсе тăвăлтан пăрăнса юлас тенĕ?

"Иртнĕ кунăн çути çук тенĕ чăвашсем. Манăçа тивĕçлисене эпĕ Енисей авăрĕсене ярса хăвартăм. Унашкал парнесене санăн Печору та тиркесе тăмĕ тесе шанатăп" (Çырусем. Митта – Кузнецова, 1955, çĕртме 6. 2 том, 320 ен).

Харкашусем усăсăр иккенне 17 çул ирĕксĕрте пулнă Митта лайăх ăнкарса илнĕ, çавăнпа вăл кайран ĕмĕр вĕçленичченех çыравçăсене пĕр-пĕрне иртнишĕн каçарма тимленĕ: "Çук сăмахшăн, кирлĕ маршăн Ан писер пĕр-пĕринчен". ("Салам курки", 1956). Анчах çакă ăна ырăпа тĕрĕслĕхшĕн кĕрешме чăрмантарман.

"Икĕ кун "Хыпарпа" лартăм. Тĕлĕнмелле статьясем пур. Уйрăмах мана пĕр кĕлĕ кăмăла кайрĕ:

Эй, ман пурнăçа тытса таракан Патша Турă, мана юлхав шухăша кĕресрен, шанчăк çухатасран, пуçа асла хывасран, кирлĕ мара калаçасран чарса тăр... Таса шухăш, йăвашлăх, тӳсĕмлĕх, çынна юратса пурăнас кăмăл пар... (Хыпар, 12 \, 1906). Шаккур, Калюков (Агаковпа Эсхель – В. Ст.) пек кашкăр чунлă çынсене çакă кĕлле эпĕ ир те, каç та калаттарăттăм. Чĕлхе вăйĕ мĕнле, сăмахсем! Ăнланусем! Ак ăçта вăл поэзи те, философи те! Турă пурри-çуккине пăхмасăрах çак кĕлĕ сăмахĕсем ĕмĕр пурăнмалла. Турă тени вăл – этем ăсĕ, ырă кăмăлĕ, пур енчен те çитĕнсе çитнĕ этем хăй! Турă – идеаллă этем. Идеаллă этем çук, анчах идеал-турă пулмалла, этем ялан хăй хĕнлĕ çулĕ çинче çав идеал патне туртăнмалла, лайăхланса, ырăланса пымалла..." (Кун кĕнеки, майăн 18-мĕшĕ, 1957).

"Сăпайлăх – чăвашăн илемĕ. Вăл пĕтсен мĕн юлать? Пур-ха. Аптраманлăх пур, ĕçченлĕх пур т. ыт. те. Пурăнатпăр! (Кун кĕнеки, майăн 21-мĕшĕ, 1957).

Йăвашлăхпа тӳсĕмлĕхе чĕннине, ăнланмалла мар сăлтавпа вирьялсене тапăннине (ку Ухсай, Урташ тата ыттисен сăмахĕсенче, Митта çырнисенче уççăнах илтĕнетчĕ) йышăнма кирлĕ мар. Çĕр çинче пĕр чĕлхепе пĕр культура анчах пуласси çинчен БСЭ (энциклопеди) çырнă пулсан килĕшме иртерех-ха. Кусем – вăхăт хиврелчĕкĕсем.

Митта пултарулăхĕн тымарĕ – тарăнра, халăх кун-çулĕнче. Вăл хăй те – чăваш халăхĕн кĕрешӳри паттăр ывăлĕ. Улатăр тĕрминчен çырса янă вăрăм евитне ахальтен мар "Я сын трудового народа!" тесе ят панă. Пултарулăхĕпе пурнăçĕ Митта Ваçлейĕ чăннипе таса чунлă чăваш, çĕршыв патриочĕ, халăх ăсчахĕ пулнине кăтартаççĕ.

"Курасси, тен, нумай, пурнасси, тен, сахал..."

(кунçул кукрашкисем çинчен)

Митта Ваçлейĕн пултару ĕçĕ-хĕлĕ виçĕ тан мар тапхăра пайланать: "пуçламăшĕ" (малтанхи яшлăх çулсем, 1924-1930), "вăтăрмĕш çулсем" (1930-1937) тата юлашки виçĕ çулталăк, «хуçалнă çунатсем сыпăнсан" варкăшнă кĕске вăхăт (1955-1957). Ытти вун çичĕ вăйпитти çул – пуçил харамне ывăтнă тапхăр, "Сармантей саманин" инкекĕ.

Сармантей самани (Сталин СССР ертӳси пулнă çулсем) пирки нумай тата тĕрлĕрен çырнă. Çав вăхăта Чăваш çĕршывĕнчи культура анинче пулса иртнĕ ĕçсем урлă тинкерсе илĕпĕр.

Чăваш халăхне тăван пек картса хакланă В.И.Ленин – тĕнчери пролетарисен ертӳси – Чăваш çĕршывне Атăл тăрăхĕнчи вак халăхсем хушшинче пĕрре те кайри картра хăварас темен: Ирĕклĕ Республика туса парса, хăй çуралса ӳснĕ Чĕмпĕре чăвашсен шĕкĕр хулине çавăрма сĕннĕ.

Çак пысăк чыса тӳрех ăнланма чăваш ертӳсисен тăн çитмен. Кайран чухласа илнĕ, анчах Аслă Чăвашстан тума кая юлнă: Сталин чавси çывăх та – çыртма çук!

20-мĕш çулсенче Ленин парнеленĕ наци ирĕкĕпе çунатланнă чăваш интеллигенцийĕ парка калча пек çĕкленнĕ. Социализм çĕршывĕн хуçалăхри ӳсĕмĕсем çыравçăсене, ăс-пурлăх ĕçлевçисене истори, чĕлхе, литература, ӳнер хирĕсенче те халăх сăн-сăпачĕллĕ çĕнĕ пулăх ӳстерме хистенĕ.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекен Митта чăваш чĕлхипе литературишĕн, чăваш историйĕшĕн çамрăкла хĕрӳлĕхпе кĕрешме пикенет. Мĕн пулса тухать унăн? Васанккана (Шаланкăна) халалланă "Сĕрĕмре" (1927) поэмишĕн ярса илеççĕ те, ун чухнехи пролеткульт висипе чăнласа сĕрĕме пĕтĕрсе чикеççĕ! Тĕрĕссипе, çав 7 çавраллă çыру-сăвăра ун чухне чăвашра пин хут çаврăннă шухăшсем кăна – унта тĕнче усни çук! Пулхăр халăхĕн тымарĕ чăвашсенче упранать текен шухăш çĕклентерсе илнипе, пулхăр-чăваш çыннисем вырăса тухса пынипе пăшăрханнă лирика сăпачĕ ялта юлнă савнийĕнчен "Эп юрласшăнччĕ савăнăçлă çемĕ. Эп пуласшăнччĕ паттăр Сетнер. Ĕмĕт сӳнчĕ, тăван, сисетне? Чăн пĕтетши пулхăр этем?.." тесе ыйтать те шанчăк пĕтменнине палăртса çырать: "Пулхăр çамрăкĕ, илт сассăма, малалла, малалла эс пăх халĕ! Пирĕн çисĕм вăйсем, мĕн, сахал-им, Çук-им пирĕн çĕнелнĕ Сăмах!" тесе йыхравлать. Тапранать пăтăрмах. Ку пуçламăшĕ çеç-ха! Кĕçех большевизм идеологĕсем (Кузнецовсемпе Долговсем) "Пулхăр теорине" таптаса, нацизм шухăшĕ патне Митта Гитлертан малтан çитнĕ тесе Мускавăн-Шупашкарăн çуйхашма пуçлаççĕ. "Кузнецов: Мы критиковали Митта как махрового националиста, докатившегося еще до Гитлера до проповеди расовой теории, в частности, выступившего против такого, чтобы чувашская кровь не смешалась с какой-нибудь иной. Сейчас он разоблачен как троцкистский двурушник". (Стенограмма заседания Президиума СП СССР от 25 апреля 1937г. (ЦГАЛИ, ф.631, оп.15, ед. хр. 171, лл.28-51).

ХХ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче ăсталăха алла илнĕ ăс-пуç çыннисене, ларутăру çине тарçălla мар пăхма пуçланăскерсене, сасартăках вут-çулăмпа вĕтелеççĕ! Пусиле тискеррĕн тытса ярасси ахăрса каять. Социализм содержанине наци форми кирлĕ марри мала тухса пырать, вара тăван чĕлхешĕн, истори тĕрĕслĕхĕшĕн, тăван ӳнершĕн тапаçланакансене "национализм" măйкăчне тăхăнтартаççĕ.

Митта Васлейне 1937 çулхи раштавăн 18-мĕшĕнче Шупашкарти хваттерĕнчен (Карл Маркс урамĕнчи Патшалăх банкне хирĕç çуртран) çĕрле тытса кайнă. Ехрем хуса çурчĕ, Улатăр тĕрми, Чулхула... Асаплă 10 çул иртет. Тавăнма вăхăт. Тăван хваттере килме юрамасть, поэт 1947 çулхи раштавра çуралнă ялне

таврӑнать, бухгалтерта, учительте ӗҫлет. 1949 ҫулхи ака уйӑхӗнче Шупашкара кил-йышне курма килсен Миттана тепӗр хут тытса пӑркӑчлаҫҫӗ, Красноярск крайӗнчи Мӑн Мурта совхозне, Таловка ялне ӑсатаҫҫӗ. Унтан 1954 ҫулхи юпа уйӑхӗнче таврӑнать. "Вунӑ ҫул лашманта, пилӗк ҫул чалтунра ҫӳрерӗм, чӑвашаллах чун туртать". (А. Талвир патне ҫырнинчен).

## «Пар чӑнлӑх, савӑнӑҫ, илем. Пар ирӗк – ҫутӑрах ҫунма!»

(Митта пултарулӑхӗн илемлӗх тӗнчи)

Пысӑках мар эткерӗнчи таса кӗмӗл пек, хӗртнӗ тимӗр пек янӑракан сӑввисемпе Митта Ваҫлейӗ чӑваш поэзине Ҫеҫпӗлле ҫивӗчлӗхӗн тепӗр ҫӳллӗше хӑпартма, "талантпа ӑса пӗрлештерме", этем чунне ҫутатма пултарчӗ. Ку шута эпӗ "Хальхаҫҫӑн ҫырнисене" ("Виҫӗ хӑват", "Пит маттур-ҫке Иванов бульварӗ", "Тав сана" – пурӗ 9 сӑвӑ) тата "Тайӑр" ярӑма пӗтӗмпех кӗртетӗп. Малтанхисенчен – "Сиктермерӗн мана кӗленче сӑпкара", "Ҫӗршывӑм, ҫӗршывӑм, мӗн кирлӗ сана", "Ҫамрӑклӑх – чаплӑ ят", "Тӑван чӗлхене" сӑвӑсем витӗмлӗ.

Вӑл мӗн ҫырни – чӑваш ҫыннин кун-ҫулӗ, ӗҫӗ, шухӑшӗ, ӗмӗчӗ. Иртсе каяйман ыратусен сасси. Чӑваш чӗлхи, халӑх шӑпи пирки тахҫан ҫырни халӗ те кивелмест вӗт-ха! Мӗн ҫырнӑ – пурнӑҫра пуррине, хӑй витӗр тухнине каланӑ, виҫеллӗ те ҫыпӑҫуллӑ кӑтартнӑ. Чӗре варринчен тухакан кӑткӑс туйӑма аякри тӑван ӑнланмалла систернӗ. Ир тӑрсан та, каҫ выртсан та сӗверӗлмен шухӑша ансат ытарлӑх витӗрех тискер тӑшман вӗчӗрхенмелле картса лартнӑ: "Спасибо! Савса ывӑлларӗ Мана Сармантей самани. Юрлар-и, кулса уйрӑлар-и? Тен, ӗмӗрлӗхех, чун савни..." (Пуҫ янисен юрри). Ҫак йӗркесене ӑнланман ҫамрӑксене тӗл пултӑм: «Мӗн тени-ха вӑл Сармантей самани?» – теҫҫӗ. "Ывӑлларӗ" сӑмаха та тӑнкарса илеймеҫҫӗ.

Вӑхӑт иртнӗҫемӗн истори пулӑмӗсем манӑҫа тухни, вулама юратман ҫынсен тавракурӑм пӗчӗкленни тата ытарлӑхпа кулӑш туйӑмӗ ҫукки палӑрать. Ку хальлӗн тӗнчере те, чӑвашра та (интернетра та!) сӑвӑлла ахаль каласа кайнисене ҫеҫ ӑнланаҫҫӗ.

Анчах картлӑн-картлӑн каласа кӑтартни литературӑн урӑх ретне, урӑх йышне кӗрет. Унта чӑнласа поэзи пит сайра тел пулать. Нумай чухне – ҫук та!

Митта Ваҫлейӗн лирики – пурнӑҫа юратса мухтакан элтешлӗх (философипе граждан) лирики. Темле йывӑр та хурлӑ чухне те вӑл этем хастарлӑхне мухтать, пурнӑҫа пахалать, ҫирӗпленме чӗнет: "Курасси, тен, нумай, пурнасси, тен, сахал, мӗн килет, мӗн пулать – тапаҫлан!" (Чул ҫыран хӗрринче).

Ытти нумай тема хушшинче Миттана чун тасалӑхӗн ыйтӑвӗ хытӑ пӑшӑрхантарать. Этем хакне вӑл тӳрӗлӗхпе, сӑвапла, тивлетпе, яваплӑхпа, ҫынлӑхпа виҫет. Телее нуша витӗр курма пӗлесси, тен, пурнӑҫри пысӑк ҫӗнӗлӗх мар-тӑр, анчах та ырлӑх астарӑвӗ-мӑнтӑрӗ витӗр ыттисен асапне ҫӑмӑллатма вӗренесси – философла шухӑшлакан ӑслӑ ҫынна ҫеҫ шӑл ҫемми. Митта поэзийӗ йӑлтах этем тӳрӗлӗхне, чунлӑхне тӳрре кӑларать.

Унӑн пултарулӑхне шкулта вӗрентме ҫӑмӑл. Сӑмах ӑсталӑхӗ, ҫыпӑҫулӑхӗ, ваттисен сӑмахӗлле каларӑшсем асра ҫӑмӑл упранаҫҫӗ. Аллитерацисемпе ас-

сонанссем тата! "Çӳресе çинçелмен çӳрен ут", "Çăлтăр хушка, ан хашка", "Хăямата янисене ан манăр", "Чăн аслă вут амăш хăвачĕ пирте" тенĕ йĕркесем хăйсем кăна чăваш чĕлхин авăрти вăрттăнлăхĕсене шырама кĕртсе яраççĕ.

Поэт çамрăксемпе пиччĕшĕ пек, ашшĕ пек лăпкăн калаçать, ватă çын пек канашсем парать, куçран пăхса чĕнсе илет те юнашар тăрать. Митта хавхаланса е пăшăрханса калаçни чĕнӳсемпе ыйтусем нумаййинченех курăнать. Вĕсем кашни сăвăра пекех. "Кăмăлтан" кĕнекере, тĕслĕхрен, пĕрремĕш сăввиех чĕнӳрен пуçланать: "Çут тăванлăхăм! Пар аллăна..." Унтан: "Çĕкленсем, вăй-хал, чашлаттар, çавам!", "Çамрăклăх! Юррăм ман ĕмĕр санпа хĕвеллентĕр!". "Çырнисен пуххинчи" (1 том) сăвăсем те чĕнӳллĕ: "Çуралнă çĕршыв, эс ма илемлĕ?", "Камшăн çуралтăн, юратнă тăван?", "Инке, паян чаплă кун...", "Эй, тантăш, тантăш, эс-им, эс-им...", "Хаклă чăваш çынни – хамăн тăван, юрлам халĕ сана юррăма", "Эх, Константин, пирĕнпеле пулсамччĕ", "Эй, хĕвелĕмçĕм, тытам-и, пăчăртам-и эп сана!", "Чăн тăванăм, янравлăн та уççăн такмаклар-и паян санпала!", "Бригадир, кастар хастаррăн!", "Чĕрт, аппа, вучахна... Çак яшка".

Шутласа кайсан, сăввисем калаçу, чĕнӳ-ыйту мелĕпе тытăнса пыраççĕ, анчах çавна вулакан сиссе те юлаймасть – шухăшĕпе калаçăва кĕрсе каять.

Элем пĕлтерĕшлĕ (символла) сăнарсем сăвăсенче тăршшипех тĕрленсе пыраççĕ. Ытарлă шахвăртусем çырусенче нумай – Шаккур, Калюк, Пачура Тимрясов, Кăткă упи, Вăрăм Ваçça йышши ятсем хăйне майлă сыхлану мелĕ те пулнах ĕнтĕ. Ытарлăн çавăрни те усса килнĕ. Сăвă ярăмне Тайăр ячĕпе витĕнтермен пулсан, эрлĕ-хурлă сăвăсемшĕн Миттана тĕрмене виççĕмĕш хут тыттарса ярас текен вăрăммисемпе шаккур-тимряссем тупăнсах тăнă.

Халăх сăмахлăхĕнчи *çул, çил, шыв, вут, çиçĕм, урхамах, ялав* тата ытти сăнарсем сăвă тĕшшинчех выртаççĕ. "Ялавăмăр – çулăм, ялавăмăр – вут!" Гоголĕн вырăс тройки пекех вĕт Миттан çăварни лашисем: "Лар часрах! Ăш вăркать, ăш çунать, кукалет – çул ыйтать çилçунат! Туссан тус лайăхрах, çил-тăман! Ирĕк, ирĕк, тăван, мĕн тăвам!". "Çăлтăр хушка, ан хашка сывлăш çавăрми!"

Çул сăнарĕ – поэзин те, прозăн та ĕмĕртен çирĕпленнĕ элемĕ. Халь кăна вăл çав тери хаваслăччĕ, "Тайăр" ярăмри çул вара – хурлăхлă: "Ман çул – çăлтăр витĕр – тап-такăр, ман кун – куççуль витĕр – уяр"(танлаштарăр, "Это радость со слезами на глазах" тенинчен вирлĕрех). "Каясси ман каллех – вăрăм çул", "Инçе çулăм ытла та хĕн-хурлă".

Атăл сăнарĕ час-часах тухать. Вăл тĕрлĕрен: "Пур пирĕн мăн Атăл". "Атăл, Атăл, çĕршывăн илемĕ". "Шывсен амăшĕ, тинĕс пуçламăш". "Çулри юлташ пек Атăл сĕм çĕрле". "Куçăмсем – алчăранă Шур Атăл, куçăмсем – сапаланчăк Пăла". "Ахăрать, кăтăрать тинĕс шывĕ, темĕнпе тытăçать пĕрмаях".

Сăвăсенчи сăнарсем чăваш халăхĕн чи лайăх енĕсене кăтартаççĕ. Тăван çĕршыва, халăха, ял-йыша, ирĕкпе чыса юратни, ĕçе, тăванлăха сума суни, çынлăхпа сăпайлăх, чăтăмлăхпа аптраманлăх, çирĕп ăспа çутă кăмăл, ĕçченлĕхпе управлăхлăх – йăлтах пит çирĕппĕн ӳкерĕнсе юлнă Митта йĕркисенче.

## Ĕмĕр иртет, кун юлать

Çуралсан пĕр ĕмĕр, вилсен çур ĕмĕр иртсен тин Митта Ваçлейĕн кун-çулĕпе

пултарулăхĕ халăх умне туллиреххĕн тухрĕ. Пĕтĕмпех мар-ха. Поэт çинчен çырнă пĕлтерĕшлĕ статьясемпе тĕпчевсем йышлă, вĕсенчен ытларахăшне "Çырнисен пуххин" 2-мĕш томĕнче (2005) кăтартса хăварнă. Ĕнтĕ çавсен уйрăм пуххи кирлĕ. Кĕнекесенче халиччен тухнисенчен çаксене уйрăммăн палăртăпăр. Емельян Захаров-Маденăн 6-7-мĕш классем валли "Митта Ваçлейĕ" тĕпчевĕ (1934), Александр Алкан "Кăмăлăмпа шухăшăм" кĕнекери умсăмахĕ (1959), Геннадий Хлебниковăн "Зрелость поэта-гражданина" статйи (1968), Атнер Хусанкайăн "Молодой коммунист" хаçатра тата "Çак юрра эп ахаль мар юрларăм" кĕнекере тухнă тĕрленчĕкĕ (1990), Георгий Федоровăн 11-мĕш класс вĕренкĕчне кĕртнĕ "Митта Ваçлейĕ" тĕпчевĕ (2003) пĕлтерĕшĕсене çухатман.

Геннадий Юмарт пухса кăларнă "Митта Ваçлейĕ: пурнăçĕпе пултарулăхĕ" (1974) пухчă пуян. Унта поэт тăванĕсем аса илнисене, Петĕр Хусанкай, Илпек Микулайĕ, Алексей Талвир, Александр Артемьев, Василий Давыдов-Анатри, Геннадий Айхи, Геннадий Пласкин тата ытти паллă çынсем çырнисене кĕртнĕ. Паха статьясемпе аса илӳсем. Вĕсем Митта Ваçлейĕн сăнарне туллин ăнланма пулăшаççĕ.

Пăлаçи паттăрне халалланă сăвăсемпе поэмăсем хушшинче Петĕр Хусанкай, Геннадий Айхи, Геннадий Юмарт, Кави Латып, Хасан Туфан сăввисемпе Николай Исмуков поэмине ырăпа палăртăпăр. Халалсемпе хăйне халалланисем тепĕр кĕнекелĕх.

Поэт ячĕ тута çинчех тăрать. Митта ячĕллĕ преми лауреачĕсем çулсеренех йышланса пыраççĕ. Геннадий Айхи, Борис Чиндыков, Владимир Степанов, Станислав Сатур, Палтай Микуçĕ, Надежда Кириллова, Сарри Мишши, Владимир Карсаков – çыравçăсем, артистсем, ӳнерçĕсем, тĕпчевçĕсем... Илле Иванов журналист пуçарнипе Патăрьел райкомолĕ йĕркеленĕ чыслă преми республика урлă та каçрĕ ĕнтĕ. Ăна Пушкăртстанри Анатолий Яковлев, Швецири Анника Бекстрем тата ыттисем илме тивĕç пулчĕç.

* * *

... Çуралса та выляса ӳснĕ Аслă Арапуçĕнче, 49 çулта куçне хупнă поэтăн масар палăкĕ çинче Митта Ваçлейĕ хăй çырнă эпитафи пур:

Антив хисеп те, чыс та ан курам.
Пин юррăмран пĕри кăна юлайтăр,
Ăна тăван ыр кăмăлпа юрлатăр -
Вара ман канлĕ пулĕччĕ тăпрам.

Нумай çынна аса килĕç çак йĕркесем. Нумай-нумай çын каллех калатăр "Кĕрхи илем" сăвă йĕркисене:

Кун-çулĕ кăлăх пулмассассăн
Вилсен те пурăнать поэт.